Л. Н. БАХМИСОВА,
Чăваш патшалăх университечĕ

# ХĔРАРАМ - САВĂÇСЕН УТĂМĔСЕМ

Сут çанталăкăн çуркуннехи ешĕл симĕстумĕ, шăнкăртатса юхакан шыв кĕвви, çу кунĕсенчи сар хĕвелĕн ачаш ăшши, ылтăн çимĕçлĕ кĕркуннен йĕпи-сапи... Курматуйма пĕлекеншĕн ку - ытарайми илем. Çак илем вăратнă туйăмсене сăмахпа уçса паракансем ĕмĕртенех пулнă. Поэзи историйĕнче арçын сăвăçсем ытларах, тĕл-тĕл пичетре арçын псевдонимне илнĕ хĕрарăм сăвăçсен ячĕсем те курăнкалаççĕ. Ĕлĕкрех арçын сăвăçсем поэзин йывăр та пархатарлă тĕнчине хĕрарăм сăвăçсене йышăнасшăн пулман тейĕн. Çакна авалхи грексемпе римлянсен тĕнче культуринче паларнă Сафопа Каринна ячĕсенченех чухлатпăр. Каярах та Тухăçпа Анăç поэтессине çав шăпах кĕтнĕ. Нимĕçсем калашле, хĕрарăма виçĕ «К» çитет: Cuche, Kinder, Cirche. XVIII ĕмĕрччен хĕрарăмсен сăввисене юрă кĕнекинче е урăх кăларăмсенче автор ятне палăртмасăр пичетленĕ пулсан, XIX ĕмĕр пуçламăшĕнче вĕсем хăйсен кĕнекисене те кăларма мехел тупнă. Малтанах хăйĕн вăтанчăк кăмăл-сисĕмне хытарса вырăссен Анна Бунине уйрăм сăвă кĕнеки пичетлеме пултарнă. Ытти вырăс сăвăçисен ĕçĕсемпе паллашма литература салонĕ уçнă.

Чăвашсен çыруллă поэзийĕ пуçланса кайнăранпа 250 çул ытларах иртрĕ теме пулать (Кĕтерне патшана халалласа çырнă сăвăран тытăнсан). 1752 çулта вырăс журналĕнче «Чăваш эпир пултăмăр...» сăвă кун çути курнă. Халăх юрри-сăвви ламран лама куçса пынă ĕнтĕ, анчах чăвашăн çырулăхĕ пулманран пичетленеймен вĕсем.

Унтанпа чăваш поэзийĕ самай ураланчĕ. Поэтăмăрсен сасси Раççей шайĕнче кăна мар, ют çĕршывсенче те уççăн янăрарĕ. Сăвăçсем çепĕç туйăмсен вăрттăнлăхне уçса витĕмлĕн янăракан йĕркесемпе пуянлатрĕç чăваш поэзине. Анчах та пултаруллă ар сăвăçсем хушшинче чăваш хĕр сăвăçсен сасси вырăссенни пекех янăрамарĕ-ха. Сăлтавĕ мĕнре-ши?

Чăваш литературинче хĕрарăм сăвăçсем пулман мар. Вĕсем пирĕн ĕлĕкех пулнă. 1905-1907 çулсенче чăваш литературине Ваçça Аниççи ячĕ кĕнĕ. Çавăн пекех Агапия Николаевна та паллă. Ăна патша çумĕнчи сенат 1907 çулхи çĕртме уйăхĕн 1-мĕшĕнче «Хыпар» хаçатăн редакторне çирĕплетнĕ, анчах вăл хаçата кăларса та курайман - «Хыпар» хупăннă. Ваçça Аниççин Октябрьти революци хыççăн «Сутă çăлтăр хăпарчĕ», «Ĕмĕт çитрĕ» кĕнекисем тухнă. Каярах вăл ытларах прозăпа ĕçленĕ, тĕрлĕ тапхăрти пурнăçа сăнланă. Сăввисенче гражданлăх, философилле шухăшлав тĕпре:

Кĕпе çеç мар, çын та ватăлать,
Çÿç шуралать, илем те таçта каять.
Мĕнле паттăр, пултаруллă пулсан та
Икĕ ĕмĕр пурăнмасть никам та.

Тĕслĕх хăех кăтартать: тĕрлĕ пулăмсене çумăн тăратса шайлаштарни паха уншăн, çапла туса этем кун-çулне тарăннăн сăнлать.

Хĕрарăмсен шăпи нихçан та çăмăл пулман. Çавăнпа пулĕ 1918 çулта Хусанта «Чăваш хĕрарăмĕсен союзне» туса хунă. Унăн пуçлăхне А.Г.Гавриловăна суйланă. Вăл çĕнĕ саманари хĕрарăм пĕлтерĕшĕ çинчен «Женщина-гражданка» кĕнеке çырса кăларнă. Çапла вара чăваш хĕрарăмĕсен уйрăм кĕнеки ХХ-мĕш ĕмĕр пуçламăшĕнче пичетленсе тухнă.

Октябрьти революци, тем тесен те, чăваш халăх литературине расна çул уçса панă. 1917 çулта «Чебоксарская правда» хаçатра Трубина Мархвин сăвви пичетленнĕ. Юмахри пек пурнăç килессе шанса кăкăр ачипе пуленĕн хавхаланса çырнă вăл:

Усни, закрой свои глазки, дитя.
Спи спокойно - я возле тебя.
О свободе, о братстве людей

И о счастье грядущих уж дней
Тебе я новую песню сложу
И дивные сказки тебе расскажу.

Пĕчĕк сăвă кăна, анчах хĕрарăмăн чун уççиллĕ кăмăлĕ, çепĕçлĕхĕ вулакана питĕ çывăх кунта.

Ку тапхăрта И.Я.Яковлев ертсе пынипе Атăл тăрăхĕнчи халăхсен хушшинчи хĕрарăмсене çутта кăларас юхăм вăйлансах пынă. Вăл хута кĕнипех М.Трубина 1903 çулта Чĕмпĕрти чăваш шкулне кĕрсе 1909 çулччен земство стипендийĕпе вĕреннĕ. Алексей Кольцов сăввисене килĕштерни тата К.Ивановпа туслă пулни сăвăсем çырма хавхалантарнă ăна.

1920 çултан Хусанти «Шурăмпуç» журналта (пĕрремĕш чăваш журналĕ), каярах «Сунталта» Трубина Мархвин сăввисем çапăнса тухма тытăнаççĕ. Вăл çырма пуçланă тапхăрта чăваш литературинче пур жанрсенчен ытларах поэзи палăрса тăнă. Трубина 30 яхăн кĕнеке авторĕ. Вăл ытларах калавсем, юмахсем, пьесăсем, повеçсем хайланă.

Уйрăм сăвăсем ытти хĕрарăмсен те курăнкаланă вăл вăхăтра. 1918 çулта Юлия Сергеева прозăлла сăввисемпе палăрать. «Уçă янăракан, ачашлакан санăн сассуна илтетĕп те - манăн чун вĕсене хирĕç кăкăртан ыйтать. Мĕнле савăнăçлă! Çавăнтах тата йĕрсе ярăттăм, çав вăхăтрах чупса пырса сана ыталаса илĕттĕм)), - тет сăвăç. Чăваш литературинче апла вăл прозăллă сăвă жанрне пуçласа яраканĕ.

Геннадий Юмарт Хусанти чăваш педтехникумĕн архивĕнче 1921 çулхи хутсем хушшинче М.Казанкова тесе алă пуснă «Юлашки шанчăк» ятлă чылай пысăк поэма ал çырăвне тĕл пулнă. Марина Казанкова-Эрнепи 20-мĕш çулсен варринче шанчăк паракан çамрăк авторсен шутĕнче тăнă:

...Этем тени кайăк мар,
Вĕçсе тухма çунат çук.
Карти тимĕр, йывăç мар -
Хуçса татма вăйăм çук.

Çак тĕрмерен çăлăнсан,
Сан патналла пырăттăм;
Ху аллуна тăссассăн,
Сана туртса илĕттĕм.

Сăвăсемсĕр пуçне Марина Казанкова пьесăсем те çырнă.

«Юрату сăввисем» антологи хатĕрленĕ май Г.Юмарт «Сунтал» журналăн 1926 çулхи юлашки номерĕнче Урукка сăвăç ятне асăрханă.

Урукка - ватă Шелепи сăвăçăн хĕрĕ. Шелепи Урукки чăваш хĕрарăмĕн ячĕ малашне çутăрах пуласса шанса çырать:

Ĕçченлĕхĕпе,
Хастарлăхупа
Эс хăвăн ятна
Час çутăлтарăн.

Тепĕр сăвăçăн - Анастасия Ивановăн - сăввисем Тăван çĕршывăн аслă вăрçи умĕнхи çулсенче «Сунтал», «Ĕç хĕрарăмĕ» журналсенче кун çути курнă. Хăш-пĕр сăввисене вăрçăччен тухнă Чăваш поэзийĕн антологине кĕртнĕ:

Хĕвел анса ларма пуçларĕ.
Шăнкăртатса юхан шывра
Ун пайăрки хитрен ташларĕ,
Сар ылтăн пек ялтра-ялтра.

Çыр хĕрринчи лутра хăвалăх
Вăш-вăш çилпе пăшăлтатать.
Унра пурах темле асамлăх,
Ăшра ыр туйăм çуратать.

Октябрьти революци хыççăн Мускаврa ĕçлесе пурăннăскер, вăл чăваш тăрăхне, çуралнă вырăнсене аса илсе сăвăсемпе такмаксем, калавсем хайланă.

Каярахпа чăваш хаçачĕпе журналĕсенче Зинаида Евграфова, Н.Игнатьева, Митрофанова (ячĕ паллă мар) сăвăçсен уйрăм сăввисем курăнкалаççĕ.

Иртнĕ ĕмĕрĕн утмăлмĕш çулĕсенче поэзи тĕнчине «Тавăру» (малтанхи варианчĕ «Пушар») поэмăпа Нелли Петровская пырса кĕрет. Хайлава В.Рсай тата Митта Ваçлейĕ пысăк хак панă. Вĕсемех сăвăçа Мускаври литература шкулне кайма сĕнеççĕ. Пысăк конкурс витĕр тухса Петровская вĕренӳ сакки çине ларма тивĕç пулать. Поэмăри ĕçсем 1905-1907 çулсенче пулса иртеççĕ. А.С.Пушкинăн «Дубровскийĕ» майлăрах.

Тĕнче, тĕнче, эс аслĕ, пысăк!
Çынпа çын çеç хаяр, кăра.
Эпир сывланă сывлăш пăсăк,
çиет вăл çамрăк кăкăра.

Мĕнлерех çивĕч литература геройĕн чĕлхи! Каярах Нелли Петровская пуçĕпех прозăна куçнă. Чăваш литературине хăйне евĕрлĕ хайлавсемпе пуянлатнă.

Çитмĕлмĕш çулсенче тата тепĕр хĕрарăм сăвăç сас парать. Вăл - Ираида Петрова (Нар Урини). Мускаври театр искусствин техникумĕнче, Ленинградри музыка училищинче вĕреннĕ юрăç-сăвăç, тăван халăхăмăрăн историйĕпе те кăсăкланнăскер, «Кун-çул юппинче» сăвăлла трагеди хайланă. Геройсен шухăшкăмăлне уçса пама вăл чăваш халăх сăмахлăхĕпе анлă усă курнă. Сăнарсем çав тапхăрти (X ĕмĕр пуçламăшĕнчи) çынсене, вĕсен ĕçĕ-хĕлне типлаççĕ. Ăслă та ырă кăмăллă, мал ĕмĕтлĕ халăх малашлăхĕ çинчен шухăшлать:

Чăваш хули лартас ĕмĕт пур ман,
Илемĕм, чунăм,
Эс мĕнле шутлан?
Ун ячĕ епле пулĕ,
Калăпăр, Сăвар?

Шел, И.Петрова, таланчĕ пур çинчех, пысăк сăвăлла пĕр драма кăна çырма ĕлкĕрчĕ («Кун-çул юппинчеи, 1973 ç.).

Ираида Петровăна прозăпа драматурги çывăхрах. Сăввисем - анлă шухăшлавлă:

Хура ĕнчĕ, хура ĕнчĕ,
Хура ĕнчĕ хурлăхан.
Хăтаринччĕ,хăтаринччĕ
Хăтаринччĕ хурлăхран.

Çапах та вăл çулсенчи поэзи тĕнчинче чи тарăн йĕр хăварнă чăвашсен пĕрремĕш профессиллĕ поэт-хĕрарăмĕ - Мария Волкова. Сăвăç хăй çуралнине çапла сăнлать:

...Анне, ытарайми аннеçĕм!
...Хĕвеллĕ кун çуратнă теççĕ
Мана эс. Тĕрĕс-и - кала?

Çăл патне шыв ăсма тухнă амăшĕ, шкул ачисем колоннăпа юрă юрласа килнине курса, хăй йывăр çын пулнишĕн вăтанса килневаскать. Çăмăлланма.

...Хĕвел çине йăтса сас пачĕ
Аçу: «Мария ят хурас.
Октябрь кунĕ, - тет, - çуралчĕ,
Ан курăнтăрччĕ хура-шура».

«Пултаруллă çын пур енпе те ăста», - тесе ахаль каламан халăх. Мария та пединститутра вĕреннĕ чухне музыкăпа, искусствăпа, литературăпа кăсăкланнă. Пĕрремĕш сăвви 1952 çулта «Чăваш коммуни» хаçатра пичетленнĕ. Унтанпа сăвă хыççăн сăвă хайланă, чăваш хĕрĕн чысне, чапне, ĕçне çӳле çĕкпеме тăрăшнă. Пĕрремĕш кĕнеки 1958 çулта пичетленнĕ. Вăл «Шанчăк» ятлă. Шанчăка пулах хăй пурăннă чухне ултă кĕнеке кăларма пултарнă. Малтанхи кĕнеки кун çути курни тата ăна тиркесе чăваш хаçат-журналĕнче çине-çинех тухнă критика статйисем талпăнуллă çамрăк сăвăçа поэзи хирĕнче тата тăрăшуллăрах ĕçлеме хистенĕ.

Платон çапла каланă: «Поэт вăл - çăмăл çунатлă та сăваплă пулăм, хавхаланса каймасăр, ăсран тухасси патне çитмесĕр чунпа уçăлаймĕ...)) М.Волковăн чунне уçăлтаракансенчен пĕри вăл - Леся Украинка. Вĕсен шăписем те пĕр пекрех - чир амакĕнчен пуçласа критиксем ура хурса пыни таранах. Л.Украинка акă мĕн çырать: «Пĕрремĕш хут алла перо тытни 30 çула яхăн пулин те, мана паянхи кун та «тӳрлетеççĕ», «çамрăк писатель)) пулсах вилетĕп ĕнтĕ, редакторсем (арçынсем?! - (Л.Б.) хама тĕллĕн утăм тума памаççĕ...»

Чир амакĕнчен хăтăлас тесе Леся Украинка пур-çук укçипе Италире, Кавказра,

Крымра, Закарпатьере, Египетра сывлама тăрăшнă пулсан, Мария Волкова Шулашкар тухтăрĕсем патĕнче сипленкелесе хĕрарăм пуçпа тăван ялĕнче çурт лартнă. Сăвăçсен тĕллевĕ пĕр майлă пулсан та, тавра курăмĕ раснарах пулнă курăнать.

Иккĕшĕн те юлташлăх çăлтăрĕ çап-çуттăн çуталса тăнă:
Одной те трудно сбиться мне с пути,
Но трудно сбиться, коль гурьбой идти. 77..Hspdwwd

Юлташăмсем! Епле эсир сăпайлă!
Ултавсăр, ирĕк сирĕн чунăрсем.
Пурнăçăмра хур тӳснĕ чух вăраххăн
Мана ӳкме памарĕç аллăрсем. *М.Волкова*

Мария Андреевнăн пурнăçтĕллевĕ-тăванлăх, тĕрĕслĕх, тасалăх, юрату. Романтика туйăмлĕ сăввисем нумай чухне «кĕтетĕп», «шанатăп», «пиллетĕп», «туятăп» йышши оптимизмла сăмахсемпе вĕçленеççĕ. Лирика геройĕ çухату, йывăрлăх, синкерлĕх витĕр тухса хăйĕн шанăçне, тасалăхне, çепĕçлĕхне, çутă ĕмĕтне, çынлăхне упраса хăварать.

Нумай сăввин сăнарлăхне танлаштарусем шăнăрлаççĕ: «сар акаци - хумлă пурçăн», «çăлтăрсем панулми пек ӳкеççĕ çĕре», «таса хĕр пек каçхи тӳлек тĕнче», «шурă кăпăк пек кăпăш сирень»... Метафорăсемпе гиперболăсем сахалрах. Гиперболăсем:

«Ача ывăçланă шывсем шаркани -
Асамлă кӳлле кăвак çут тăканни»,
«Пĕрлешĕччĕ пĕлĕт чаплă çĕрпеле,
хĕвел тухсан...»

Метафорăсем: «çĕр кăкăрĕ)>, «вĕçрĕç иртрĕç шур урхамахсем». Уйрăмах Мария Волкова сăпатлантарусен сăнарлă вăйне шанать: «каçпа çил ачисем тухаççĕ)>, «çĕрĕн пичĕ кĕренленчĕ», «çĕмĕртсем пĕркеннĕ шурă шупăр» т.ыт.те.

Мария çуралсанах ашшĕ ăна телей пилленĕ пулин те, поэтăн шăпи драматизмлă. Хĕр шăпине вăрçă вăхăтĕнчи йывăр пурнăçта, вăрçă хыççăнхи чиновниксен тӳрккеслĕхĕ те хуçнă пулĕ.

Хĕрарăм поэзийĕ арçын туйман, асăрхайман пулăмсене те сăнлать. Хĕрарăм психологийĕпе çырнă сăвăсем тап-таса çăлкуçран шăнкăртатса тухса юхакан шыв пек юрланаççĕ, хавхалантараççĕ, шухăшлаттараççĕ. Чĕрĕ сăнарсемпе, хăйне евĕрлĕ ăсталăхпа уйрăлса тăраççĕ.

Юлашки çулсенче хĕрарăм-сăвăçсем хăва пек хунаса кайрĕç. Вĕсене аталанма Мария Волкова сăвăç халалĕ - «Сана, ман хыççăнхи хĕр-сăвăç!)> - хавхалантарнă,тен:

...Татса калатăп: эп вилсен,
Çак юррăма хăвна илсен,
Ăнланăн пĕтĕмпех
Хыпса çунан хĕмпе
Хăватлăхăма сана парам
Чи пысăк юрату таран.
Пуян пул. Тăнлă пул. Таса.
Ан пул çеç тăлăх, мĕскĕн, кĕвĕç.
Ман хыççăн çуралакан хĕр-сăвăç,
Сана - ман сывлăш, ман асам -
Ман океан.

Çапла вара Мария Андреевнăн чунĕ акăш пулса чăваш поэзийĕн тинĕсне аннă. Тинĕсĕ-çырансăр.

Ваççа Аниççи, Трубина Мархви, Ираида Петрова, Мария Волкова тата ыттисем тĕрлĕ ӳсĕмри сăвăçсем пулнăран, тĕрлĕ вырăнта ĕçлесе пурăннăран пĕр-пĕринпе хутшăнсах кайман çĕнĕ ăру çыравçисенчен нумайăшĕ пĕрне-пĕри аван пĕлет. Пĕрпĕринчен вĕренсе, пĕри теприн ĕçĕпе хавхаланса, тăван халăха асла хурса, вăтанчăк кăмăл-сисĕмне çемçетсе тĕрлĕ хаçат-журналта пичетленеççĕ, кĕнекесем кăлараççĕ.